ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ НУМАЙ АЧАЛЛĂ ÇЕМЬЕСЕНЕ ÇЁР ЛАПТĂКЁСЕМ УЙĂРСА ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем уйăрса парасси çинчен" 2011 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 10 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2011, 89–91 №-сем; 2012, 95 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 3 №; 2015, 5 №; 2016, 6, 10 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьян иккĕмĕш абзацне "вун сакăр çула" сăмахсем хыççăн "е ача (ачасем) вĕренӳ ĕçне пурнăçлакан организацире куçăн майпа вĕренет пулсан çирĕм виçĕ çула" сăмахсем хушса хурас, "опекунсенчен (попечительсенчен)" сăмахсем хыççăн "(малалла çавăн пекех – нумай ачаллă çемьери ашшĕ-амăшĕ)" сăмахсем хушса хурас;

2) 2 статьян 3-мĕш пайне çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Çула çитнĕ, вĕренӳ организацийĕсенче куçăн майпа вĕренекен, нумай ачаллă çемье йышĕнче çак Саккунпа килĕшӳллĕн çĕр лаптăкĕн хар-

пăрлăхçи пулса тăнă çирĕм виçĕ çула çитмен ачасен çĕр лаптăкне пĕр хутчен тӳлевсĕр илмелли прави сыхланса юлать.";

3) 3 статьян виççĕмĕш абзацĕнче "асăннă çемьен çула çитнĕ членĕсенчен" сăмахсене "асăннă çемьери ашшĕ-амăшĕнчен" сăмахсемпе улăштарас;

4) 5 статьяра:

а) 11-мĕш пайра:

улттăмĕш абзаца "çула çитмен ачасем," сăмахсем хыççăн "çула çитнĕ, вĕренӳ организацийĕсенче куçăн майпа вĕренекен çирĕм виçĕ çула çитмен ачасем" сăмахсем хушса хурас;

çакăн пек çырса çиччĕмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"çула çитнĕ çирĕм виçĕ çула çитмен ача (ачасем) вĕренекен вырăнтан вăл (вĕсем) вĕренӳ организацийĕнче куçăн майпа вĕреннине çирĕплетекен, заявлени панă кунччен (кун пек тĕслĕх пур чухне) пĕр уйăх маларах мар панă справкăна.";

çиччĕмĕш – вун виççĕмĕш абзацсене тивĕçлĕн саккăрмĕш – вун тăваттăмĕш абзацсем тесе шутлас;

вун тăваттăмĕш абзаца вун пиллĕкмĕш абзац тесе шутлас тата унти "нумай ачаллă çемье членĕсем" сăмахсене "ачасем, вĕренӳ организацийĕсенче куçăн майпа вĕренекен, çула çитнĕ çирĕм виçĕ çула çитмен ачасем (пур пулсан)" сăмахсемпе улăштарас;

вун пиллĕкмĕш тата вун улттăмĕш абзацсене тивĕçлĕн вун улттăмĕш тата вун çиччĕмĕш абзацсем тесе шутлас;

вун çиччĕмĕш абзаца вун саккăрмĕш абзац тесе шутлас тата унти "нумай ачаллă çемье членĕсем" сăмахсене "нумай ачаллă çемьери ашшĕ-амăшĕ" сăмахсемпе улăштарас;

вун саккăрмĕш тата вун тăххăрмĕш абзацсене тивĕçлĕн вун тăххăрмĕш тата çирĕммĕш абзацсем тесе шутлас тата вĕсенчи "вун пĕрмĕш, вун виççĕмĕш – вун çиччĕмĕш" сăмахсене "вун иккĕмĕш, вун тăваттăмĕш – вун саккăрмĕш" сăмахсемпе улăштарас;

çирĕммĕш абзаца çирĕм пĕрремĕш абзац тесе шутлас тата унти "виççĕмĕш–улттăмĕш" сăмахсене "виççĕмĕш–çиччĕмĕш" сăмахсемпе улăштарас, "нумай ачаллă çемьен çула çитнĕ ĕçлеме пултаракан пĕр-пĕр членĕ" сăмахсене "нумай ачаллă çемьери ĕçлеме пултаракан ашшĕ-амăшĕнчен пĕри" сăмахсемпе улăштарас;

çирĕм пĕрремĕш абзаца çирĕм иккĕмĕш абзац тесе шутлас;

çирĕм иккĕмĕш тата çирĕм виççĕмĕш абзацсене тивĕçлĕн çирĕм виççĕмĕш тата çирĕм тăваттăмĕш абзацсем тесе шутлас тата вĕсенчи "виççĕмĕш–улттăмĕш" сăмахсене "виççĕмĕш–çиччĕмĕш" сăмахсемпе улăштарас;

çирĕм тăваттăмĕш – çирĕм саккăрмĕш абзацсене тивĕçлĕн çирĕм пиллĕкмĕш – çирĕм тăххăрмĕш абзацсем тесе шутлас;

çирĕм тăххăрмĕш абзаца вăтăрмĕш абзац тесе шутлас тата унти "нумай ачаллă çемье членĕсем" сăмахсене "нумай ачаллă çемьери ашшĕ-амăшĕ" сăмахсемпе улăштарас.

вăтăрмĕш – вăтăр тăваттăмĕш абзацсене тивĕçлĕн вăтăр пĕрремĕш – вăтăр пиллĕкмĕш абзацсем тесе шутлас;

вăтăр пиллĕкмĕш абзаца вăтăр улттăмĕш абзац тесе шутлас тата унти "нумай ачаллă çемье членĕсене" сăмахсене "ачасене, вĕренӳ организацийĕсенче куçăн майпа вĕренекен, çула çитнĕ çирĕм виçĕ çула çитмен ачасене" сăмахсемпе улăштарас;

вăтăр улттăмĕш – хĕрĕх пĕрремĕш абзацсене тивĕçлĕн вăтăр çиччĕмĕш – хĕрĕх иккĕмĕш абзацсем тесе шутлас;

ă) 11^1-мĕш пая "вун сакăр çул" сăмахсем хыççăн "е вĕренӳ ĕçне пурнăçлакан вĕренӳ организацийĕнче куçăн майпа вĕреннĕ ача (ачасем) çирĕм виçĕ çул тултарни" сăмахсем хушса хурас;

б) 11^2-мĕш пайра "çирĕм виççĕмĕш – çирĕм çиччĕмĕш" сăмахсене "çирĕм тăваттăмĕш – çирĕм саккăрмĕш" сăмахсемпе улăштарас;

5) 5^2 статьян 1-мĕш пайĕнче "Пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма пулăшасси çинчен" сăмахсене "Пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма, туризм инфратытăмĕн объекчĕсене тума тата территорисене ытти майпа аталантарма пулăшасси çинчен" сăмахсемпе улăштарас;

6) 6^1 статьяра "Социаллă тивĕçтерĕвĕн пĕрлехи патшалăх информаци системине" сăмахсене "патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун, çак Саккунăн 1 статйин 2024 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрекен 6-мĕш пункчĕсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çу уйăхĕн 21-мĕшĕ
34 №